25-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
ФЕВРАЛЬ
7
ВЫРСАРНИКУН
30(6267) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирĕн войскăсем Лисичанск, Барвенково, Балаклея, Батайск, Ейск хулисене йышăнса илнĕ

1. Февралĕн 6-мĕшĕнче Украинăра пирĕн войскăсем, хаяр çапăçусем хыççăн, ЛИСИЧАНСК хулипе чугунçул станцине, БАРВЕНКОВО хулипе чугунçул станцине, БАЛАКЛЕЯ хулипе чугунçул станцине йышăнса илнĕ.

2. Дон çинчи Ростовран кăнтăр арахра пирĕн войскăсем, вăйлă çапăçу хыççăн, БАТАЙСК хулипе чугунçул узелне йышăнса илнĕ.

3. Пирĕн войскăсем, малалла ăнăçлă наступлени туса пырса, Азов тинĕсĕн çыранне тухнă та ЕЙСК хулипе портне йышăнса илнĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

ВКП(б) Обкомĕнче

Тĕрĕслесе палăртнă тăрăх, Красноармейски тата Çĕрпÿ районĕсенчи колхозсенче çуракине хатĕрленес ĕç питех те çителĕксĕр пулса пырать. ВКП(б) Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕ ятарласа решени йышăннă пулин те, ВКП(б) Красноармейски райкомĕ, райсовет исполкомĕ тата райçĕрĕç пайĕ юлашки вăхăтченех çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе тивĕçлипе ĕçлемен. Районра колхозсем пĕр-пĕринпе вăрлăх улăштарса илес тата пĕр-пĕрне пулăшас ĕçе халиччен те организацилемен. Январĕн 15-мĕшĕ тĕлне 8 колхозра тĕштырă культурисен вăрлăхĕсене хатĕрлесе çитермен. Вăрлăх хывас плана район тĕштырăсем енĕпе 93,5 процент, пĕр çул ÿсекен курăксем енĕпе 90 процент пурнăçа кĕртнĕ, нумай çул ÿсекен курăксен вăрлăхĕсене 280 центнер хатĕрлес вырăнне пĕтĕмпе те 39 центнер çеç хатĕрленĕ. Тĕштырă культурисен вăрлăхĕсене 13,3 процент кăна сортласа тасатнă. Вырăнти удобренисене хатĕрлесе турттарса кăларас ĕç начар пурнăçа кĕрсе пырать, ялхуçалăх машинисемпе инвентарĕсене юсас ĕçе организацилемен. Çапла, сăмахран, „Искра" колхозра тимĕрçĕ лаççи пур пулин те плугсене, сеялкăсене тата сÿресене юсамаççĕ. Тельман ячĕпе тăракан колхозра план тăрăх хире 190 тонна тислĕк кăларас вырăнне 30 тонна кăна кăларнă. Вăрлăхсене сортламан тата вĕсен-шăтас пахалăхне тĕрĕслемен, юр тытса хăварас тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ, хăмăтсене, ĕнерчĕксене, плугсене тата ытти инвентарьсене çураки валли хатĕрлемеççĕ.

Çавăн пекех Çĕрпÿ районĕнчи колхозсенче те çуракине хатĕрленес ĕç начар пулса пырать. 1943 çулхи январĕн 20-мĕшĕ тĕлне вăрлăхсене хывса хăварас тата сортлас ĕçе вĕçлемен (61,8 процент кăна сортланă), вăрлăх тĕрĕслекен лабораторисенче вăрлăх тĕрĕслеттерес ĕçе организацилемен. Колхозсенче пур плугсенчен 410 плугне кăна е 25 процент, культиваторсене 32,5 процент тата сеялкăсене 87 процент çеç юсаса хатĕрленĕ.

ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем тракторсене юсас ĕçрен аякра тăраççĕ, çавна пула Красноармейски МТС-ĕнче юсамалли 41 трактортан 21 тракторне кăна, Çĕрпÿ МТС-сĕнче 58 трактортан 29 тракторне кăна çураки валли юсаса хатĕрленĕ.

ВКП(б) Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕ вырăнти удобренисем хатĕрлесе турттарса кăларас тĕлĕшпе уйăхлăх ирттересси çинчен йышăннă постановленине ВКП(б) Красноармейски тата Çĕрпÿ райкомĕсем пурнăçа кĕртменнине тата палăртнă заданисене тултарманнине ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ тÿсме çук тесе шутлать. Çĕрпÿ районĕ тăрăх тислĕк кăларас плана уйăхлăх вăхăтĕнче пĕтĕмпе те 43 процент кăна тултарнă, торф пĕр тонна та хатĕрлесе турттарман, кĕл пухас плана 10 процент çеç, кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухас плана 13 процент, минераллă удобренисем турттарса тухас плана 13 процент, юр тытса хăварас плана 15 процент кăна тултарнă. Красноармейски район тăрăх тислĕк кăларас плана 40 процент, торф кăларас плана 1,5 процент кăна тултарнă, минераллă удобренисем турттарса тухма халиччен те тытăнман.

Красноармейски тата Çĕрпÿ райкомĕпе райисполкомĕсем колхоз кадрĕсене хатĕрлес ĕçе пачах та хакламан, çавăнпа та колхоз председателĕсен, уйхир бригадирĕсен, звено руководителĕсен курсĕсене вăхăтчен те организацилемен, çавăн пекех колхозниксен агротехника вĕренĕвне те сарса яман.

Ялсовечĕсем, партипе комсомолăн пуçламĕш организацийĕсем чылайĕшĕ, ВКП(б) райкомĕсем кулленех тĕрĕслесе тата ертсе пыман пирки, колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе куллен туса пымаççĕ, вĕсене çуракине ăнăçлăн хатĕрленме мобилизацилемеççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çапла йышăннă:

1. ВКП(б) Красноармейски тата Çĕрпÿ райкомĕсем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлессе тесе йышăнас. Вĕсене çакăн çинчен асăрхаттарас: çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе малашне те вăраххăн ĕçлени пĕлтĕрхи йăнăшсене тепĕр хут тăвасси патне илсе пырать, пĕлтĕр хăшпĕр колхозсем çуракине начар хатĕрленнĕ пирки ака ĕçĕсене вăраха ячĕç, пĕчĕк тухăçлă тырпул туса илчĕç, çавна пула государство умĕнчи хăйсен обязательствисене тултараймарĕç.

2. ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене, райисполкомсен председателĕсене тата райçĕрĕç пайĕсен заведующийĕсене çуракине хатĕрленес ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма, хатĕрленÿ ĕçĕсене ВКП(б) Обкомĕн XIII-мĕш пленумĕ палăртнă сроксенче вĕçлемелле тума хушас.

3. Колхозсен пĕр-пĕринпе вăрлăх улăштарассине, пĕр-пĕрне пулăшассине тата çитмен вăрлăха сутăн илессине халех организацилемелле, кăçалхи февралĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр вăрлăхсене кашни колхозрах пĕтĕмĕшпех хывса хăвармалла. Çав срок тĕлнех вăрлăхсене тасатас тата вĕсен шăтас пахалăхне тĕрĕслес ĕçе вĕçлемелле. Вăрлăх тасатмалли машинăсене пурне те ĕçе ямалла, кашни колхозрах вăрлăх тасатас тĕлĕшпе бригадăсем организацилемелле, вĕсене ертсе пыма чи опытлă колхозниксене лартмалла. Кашни колхозрах вăрлăхсене лайăх сыхласа усрамалла тата вĕсене пăсса, салатса е çаратса пĕтерсе айăпа кĕнĕ çынсене çирĕп ответ тыттармалла.

4. Красноармейски тата Çĕрпÿ районĕсенчи ВКП(б) райкомĕсен секретарĕсене, райисполкомсен председателĕсене, МТС-сен директорĕсемпе политотделсен начальникĕсене машинно-тракторнăй станцисем тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕçре намăслăн юлса пынине пĕтерме тата юсав ĕçĕсене правительство палăртнă сроксенче вĕçлемелле тума хушас.

5. Колхозсенчи тимĕрçĕ лаççисене пурне те пĕр чарăнусăр ĕçлеттермелле тата плугсене, сеялкăсене, культиваторсене ВКП(б) Обкомĕпе Совнарком палăртнă сроксенче юсаса пĕтермелле. Красноармейски районри Янмурзино колхозĕнчи тимĕрçĕ Гордеев юлташ пуçарăвĕпе, тимĕрçĕсем хушшинче ялхуçалăх машинисене çурхи ĕçсем валли срокчен хатĕрлесе çитересси çинчен пыракан социализмлă ăмăртăва анлăн организацилемелле.

6. ВКП(б) Красноармейски тата Çĕрпÿ райкомĕсем вырăнти удобренисене хатĕрлесе турттарас ĕçе хакламаннине сивлес.

Райкомсен секретарĕсене Григорьевпа Митьков юлташсене вырăнти удобренисем хатĕрлесе турттарас тĕлĕшпе кашни колхозах кулленхи заданисем пама хушас, Совнаркомпа ВКП(б) Обкомĕ палăртнă плана мĕнле пулсан та пурнăçа кĕртме хушас.

7. ВКП(б) Красноармейски тата Çĕрпÿ райкомĕсене колхоз председателĕсем, уйхир бригадисен бригадирĕсем, звеносен руководителĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе халех кĕске сроклă курссем пухса вĕрентме тытăнма, çавăн пекех тата февральпе март уйăхĕсенче акаçăсене, плугпа ĕçлекенсене, яровизаторсене тата колхозри ытти кадрсене вĕрентсе хатĕрлеме хушас.

8. ВКП(б) Красноармейски тата Çĕрпÿ райкомĕсене партипе комсомолăн колхозсенчи пуçламĕш организацийĕсен ĕçне татăкланах вăйлатас тĕлĕшпе мерăсем йышăнма хушас. Кашни колхозрах коммунистсен, комсомолецсен тата беспартийнăй активăн вăйĕпе куллен массăллă-политикăллă ĕçе туса пымалла, вăл халăха çуракине ăнăçлăн ирттерессишĕн кĕрешме мобилизацилетпĕр.

ВКП(б) райкомĕсене ялсовечĕсемпе партин пуçламĕш организацийĕсене колхозниксем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе туса пырас ĕçре пулăшма районри центрсенчен колхозсене опытлă агитатор-организаторсене яма хушас.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Февралĕн 5-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Февралĕн 5-мĕшĕнче пирĕн войскăсем вăйлăн çапăçнă хыççăн Старый Оскол хулипе чугунçул станцине тытса илнĕ. Тăшманăн хупăрласа илнĕ гарнизонне пĕтерсе тăкнă, пĕр пайне тыткăна илнĕ. Старый Оскол хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн войскăсем Боброво-Дворское тата Скороднее ятлă район центрĕсене тытса илнĕ.

Украинăра пирĕн войскăсем Изюм хулипе чугунçул станцине, Великий Бурлук ятлă район центрĕпе чугунçул станцине, Яма ятлă район центрĕпе чугунçул станцине тата Ольховатки ятлă район центрне тытса илнĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех çапăçса пынă.

* * *

Февралĕн 4-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 10 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 150 автомашинине çитиччен пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, боеприпассен 3 складне сирпĕнтерсе янă, пĕр поезда çĕмĕрнĕ, тăшманăн пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Дон çинчи Ростовран кăнтăртарахра пирĕн войскăсем, тăшман хирĕç тăнине сирсе ярса, малалла кайнă. Н-ски кавалерийски часть 2 паровоз, 300 вагон, 150 автомашина, 3 танкетка, 100 мотоцикл тата продовольствин 2 складне тытса илнĕ. Крыловская станцине йышăннă чухне пирĕн боецсем трофейăсем нумай тытса илнĕ, трофейăсем хушшинче танксем тиенĕ эшелон тата продовольстви тиенĕ эшелон пур. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем, малалла куçса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ, 400 гитлеровеца вĕлернĕ, 4 танка тата 3 танкеткăна пĕтерсе тăкнă, 175 çынна тыткăна илнĕ.

* * *

Купянск районĕнче пирĕн войскăсем, малалла куçса, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. 8 йывăр оруди тата тырă хунă 2 склада тытса илнĕ. Тепĕр участокра Н-ски гвардейски чаçăн боецĕсем нимĕçсен 6 танкне, 3 бронемашинине, 20 автомашинине, 3 паровозне тата 45 вагонне тытса илнĕ.

* * *

Курскран хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступлени туса пынă. Халăх пурăнакан пĕр пунктшăн пынă çапăçура Н-ски часть венгерецсен пехотнăй полкне аркатса тăкнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Тепĕр участокра майор Сычевой, автоматчиксен ушкăнĕпе пĕрле, пĕр ялта тĕрекленсе ларнă тăшманăн тылне кĕрсе кайнă. Пирĕн автоматчиксем сасартăк атакăласан, нимĕçсем тарнă, вĕсем 30 оруди тата пулеметсем, винтовкăсем, боеприпассем нумай пăрахса хăварнă.

* * *

Смоленск облаçĕнчи партизансен темиçе отрячĕ январĕн 15-мĕшĕпе 27-мĕшĕ хушшинче тăшманăн 15 поездне ÿпĕнтерсе янă. 13 паровоз тата 200 вагона çити çĕмĕрĕлнĕ. Çав вăхăт хушшинчех совет патриочĕсем 6 кĕпере сирпĕнтерсе янă, чугунçула темиçе тĕлте пăснă, телефонпа телеграф линине 17 километр тăршшĕ касса илнĕ.

* * *

Нимĕçсен 297-мĕш пехотнăй дивизин командирĕ Мориц Дреббер генерал-майор, тыткăна лекнĕскер, çапла каласа панă: «Вырăссен наступленине, нимĕç войскисене çавăрса илнипе вĕçленнĕскере, чарма май пулмарĕ. Сталинград пирĕн мĕнпур резервсене çисе ячĕ. Январĕн 10-мĕшĕнче вырăссем Сталинград патĕнче çавăрса илнĕ пирĕн войскăсене хирĕç татăклă наступлени пуçласа ячĕç. Пирĕн лару-тăру кунсеренех начарланса хăрушланса пычĕ. Вырăссем пур енчен те пирĕн чаçсене оборона линийĕнчен сирпĕте-сирпĕте кăларса хĕвелтухăçнелле хĕссе пычĕç. Январĕн 25-мĕшĕнче ирхине тĕрлĕ калибрлă артиллерирен вăйлăн персе тăрса хатĕрленнĕ хыççăн вырăс пехоти, танксем пулăшса пынипе, атакăна кайрĕ. Вырăс танкĕсем сулахайри фланга татрĕç те пехотăн отрячĕсемпе тата танксем çине ларнă автоматчиксен групписемпе пĕрле оборона ăшне шала кĕрсе кайрĕç, дивизин чаçĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса пăрахрĕç. Артиллери полкĕн командирĕ Фохт полковник хăйĕн штабĕпе пĕрле тыткăна лекнĕ. 297-мĕш дивизири 523-мĕш полкăн командирĕ Линдов подполковник хăйĕн полкĕпе пĕрле татăлса юлнă та тыткăна паранна. Вырăс танкĕсем дивизи штабĕ тăнă çурта орудисемпе тата пулеметсемпе пеме тытăнчĕç. Питĕ хăрушă пулса тăчĕ. Эпĕ хамăн дивизин юлашкийĕсемпе пĕрле тыткăна паранма шут тытрăм. Нимĕçсен 297-мĕш пехотнăй дивизийĕ çапла пĕтсе ларчĕ вара. Ун хыççăн Сталинград районĕнче хупăрласа илнĕ ытти дивизисем те нумайĕшĕ пĕтсе ларчĕç. Пирĕн çухатусем çинчен каламалли те çук. Вĕсем питех те пысăк. Эпир хамăрăн мĕн пулнине пурне те çухатрăмăр».

* * *

Аялахра Воронеж облаçĕнчи Пасеково ялĕнче нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Хĕрлĕ Çар пыра-пыра çапнипе каялла чакнă чухне нимĕçсем çак ялта калама çук тискер ĕçсем тунă. Гитлерла бандитсем нÿхрепсемпе подвалсенчен унта пытанса ларнă çынсене турта-турта кăларнă та вĕсене пере-пере вĕлернĕ. «Палачсем И. Колесниковăна тата унăн 6 çулхи хĕрне, И. Задорожная тата ытти нумай çынна вĕлернĕ. Фашистла ирсĕрсем Бутова колхозницăн çуртне вут тĕртнĕ. Бутова пушара сÿнтерме тытăнсан, палачсем ăна персе вĕлернĕ». Акта старши лейтенант А. Леонтьев, гварди красноармеецĕ Ф. Сахнов, Д. Калинин, Пасеково ялĕнчи çынсем В. Ахременко, Е. Задорожная тата ыттисем те алă пуснă.

Февралĕн 6-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Февралĕн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Дон çинчи Ростовран кăнтăртарахра пирĕн войскăсем противникăн темиçе опорнăй пунктне йышăнса илнĕ. Н-ски моторизованнăй часть пĕр чугунçул станцине вăркăнса кĕрсе кайнă та нимĕçсен танксем, автомашинăсем, боеприпассем тата çар хатĕрĕсем тиенĕ эшелонне тытса илнĕ. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем халăх пурăнакан 2 пысăк пункта тытса илнĕ. Нимĕç пехотин икĕ ротине пĕтерсе тăкнă, тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Красный Лиман районĕнче пирĕн войскăсем наступлениллĕ операцисем туса пынă. Халăх пурăнакан пĕр пысăк пунктшăн пынă çапăçусенче нимĕçсен пехотнăй батальонне аркатса тăкнă. 4 танк, 7 оруди, 4 миномет, 16 пулемет, 25 автомашина тата ытти тĕрлĕ çар пурлăхĕсем те тытса илнĕ. Тăшманăн 200 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. 115 нимĕçе тыткăна илнĕ. Пирĕн çăмăллăн куçса çÿрекен отрядсем, тăшманăн тылĕнче кĕрешекенскерсем, нимĕçсен халăх пурăнакан 3 пысăк пунктри гарнизонĕсене пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн горючи тата продовольстви турттарса пыракан автоколоннине тытса илнĕ.

* * *

Курскран хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пынă. Н-ски соединенин чаçĕсем халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ, 300 çынна çити тыткăна илнĕ.

* * *

Старый Оскол хулинче çавăрса илнĕ тăшман гарнизонĕ юлашки кунсенче хуларан тухма темиçе хут та хаяррăн хăтланса пăхнă. Пирĕн чаçсем гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă, вĕсене пысăк çухатусем тÿстернĕ. Ĕнер пирĕн чаçсем çав гарнизона пĕтерсе тăкнă, пĕр пайне тыткăна илнĕ.

* * *

Витебск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ икĕ эрне хушшинче тăшманăн войскăсем турттарса пыракан 2 эшелонне тата хĕçпăшалсемпе боеприпассем тиенĕ 3 эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Тепĕр отрядри партизансен ушкăнĕ январь уйăхĕн вĕçĕнче çар грузĕсем тиенĕ эшелона ÿпĕнтерсе янă. Паровоза тата 20 вагона стройран кăларнă. Чугунçулăн çав участокĕнче вара поездсем çÿреме чарăннă.

* * *

Нимĕçсен 87-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 277-мĕш полкăн тыткăна лекнĕ командирĕ подполковник фон Зезс, Великие Луки хулинчи гарнизонăн начальникĕ пулнăскер, çапла каласа панă: «Великие Луки хулинче йĕри-тавра çавăрса илнĕ нимĕç гарнизонне пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Гарнизонăн юлашкийĕсем паранна. Хулара боеприпассемпе продовольствин пысăк запасĕсем пулнă, анчах вырăссем наступлени туса хулана темиçе пая уйăрса янă, çав пайсем хушшинче вара нимĕнле çыхăну та пулман. 83-мĕш дивизин командирĕ Шерер генерал пире Гитлер ячĕпе кашни кун пĕр приказ паратчĕ: «Юлашки çын юлмиччен тытăнса тăрăр», тетчĕ. Шерер пирĕн гарнизона пулăшма йышлă вăйсем килеççĕ тесе тăчĕ. Анчах та çав пулăшу килмерĕ. Хуйха ÿкнĕ салтаксене хавхалантарас тесе, Шерер гарнизонри мĕнпур салтаксене иккĕмĕш класлă тимĕр хĕрессемпе, унтер-офицерсене — пĕрремĕш класлă тимĕр хĕрессемпе наградăлама хушрĕ. Мана хама самолетпа рыцарь хĕресĕ илсе килчĕç. Çав наградăсем пире хавхалантармарĕç. Йăлтах урăхла, салтаксем хăйсене пĕр усăсăр вилмелле тунăшăн питĕ тарăхрĕç. Пирĕн вилмелле пулса тăнине пĕлсен, эпĕ, салтаксем хистенипе, хамăн штабпа пĕрле тыткăна парантăм. Манпа пĕрле 56 офицер тыткăна парăнчĕç».

* * *

Югославири партизансем Буяновицăри нефть промыслисене кĕрсе кайнă та нимĕç хуралне пĕтерсе тăкнă. Партизансем инженерсем пулăшнипе промышленность сооруженийĕсене сирпĕнтерсе янă, нефть промыслинчи мĕнпур оборудование пĕтерсе тăкнă.

Унăн превосходительствине ИОСИФ В. СТАЛИНА,

СОВЕТЛĂ СОЦИАЛИЗМЛĂ РЕСПУБЛИКĂСЕН СОЮЗĔН ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИНЕ

МУСКАВ.

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Хĕçпăшаллă вăйĕсен Главнокомандующийĕ пулса, Эпĕ Сирĕн войскăсем Сталинград патĕнче Эсир Верховный Главнокомандующи пулса ертсе пынипе чаплăн çĕнтернĕ май Сире салам яратăп. Хулашăн 162 кун хастарлăн çапăçни, Сирĕн ятăра ĕмĕрлĕхе чапа кăларнă çав çапăçу тата вăл çапăçăвăн паян пур американецсем те уявласа хисеплекен татăклă результачĕ — нацизмпа унăн хÿрешкисене хирĕç пыракан пĕрлешнĕ халăхсен вăрçин историйĕнче чаплă сыпăксенчен пĕри пулса тăрĕç. Сирĕн фронтри войскăсен командирĕсемпе боецĕсем тата заводсемпе уйхирсенче ĕçлесе вĕсене пулăшса тăнă арçынсемпе хĕрарăмсем хăйсен çĕршывĕн хĕçпăшалне чапа кăларас тесе, çеç мар пĕрлешнĕ, вĕсем хăйсен примерĕпе мĕнпур пĕрлешнĕ нацисене пирĕн пĕрлехи тăшмана татăклă поражени тÿстермешкĕн тата пĕр условисĕрех парăнтармашкăн çĕнĕрен пĕтĕм вăйя хурса кĕрештерес тесе те пĕрлешнĕ.

ФРАНКЛИН Д. РУЗВЕЛЬТ.

Вашингтон, февралĕн 5-мĕшĕ.

ФРАНКЛИН Д. РУЗВЕЛЬТ ГОСПОДИНА,

Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Хĕçпăшаллă вăйĕсен Главнокомандующине

Шурă Çурт, Вашингтон.

Совет войскисем Сталинград патĕнче çĕнтернĕ май саламланăшăн Сире тав тăватăп. Пĕрлешÿллĕ Штатсен, Великобританин тата Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен боевой ĕçĕсем çывăх вăхăтрах пирĕн пĕрлехи тăшмана çĕнтересси патне илсе пырĕç тесе шанса таратăп.

И. СТАЛИН.

Мускав, Кремль, 1943 сулхи февралĕн 6-мĕшĕ.

СТАЛИНГРАДРИ МИТИНГ

Шартлама сивĕ те хĕвеллĕ ир. Паян пилĕк уйăх хушшинче малтанхи хут Сталинградра бомбăсем кĕрлесе çурăлни, орудисем харăслатса пени тата пулеметсем шатăртатни вырăнне чуна хавхалантаракан музыка илтĕнет. Ишĕлнĕ çуртсен стенисем çинче транспарантсемпе лозунгсем. Хĕрлĕ Çар çурчĕн фасачĕ çинче — Политбюро членĕсен, мухтава тухнă çар начальникĕсен портречĕсем. Çав çар начальникĕсем ертсе пынипе пирĕн паттăр воинсем Атăл çинчи крепость патне пымалли вырăнсенче нимĕçсене çапса аркатнă.

11 сехет. Площадьсенчен пĕрине Хĕрлĕ Çарпа пĕрле Сталинград предприятийĕсенчи рабочисем пуханаççĕ. Малтанхи поездпа хулана Сарепта станцинчи железнодорожниксем килнĕ. Площадь тулсах пырать. Çынсен сăн-пичĕсем уяври пек хаваслă.

12 сехет. Трибуна çинче Украинăри Коммунистсен (большевиксен) партийĕн Центральнăй Комитечĕн Секретарĕ Н. С. Хрущев, генерал-лейтенант Чуйков, генерал-лейтенант Шумилов, гвардин генерал-майорĕ Совет Союзĕн Геройĕ Родимцев, Хĕрлĕ Çарăн Сталинградри çапăçусенче пулнă чаçĕсемпе соединенийĕсен командирĕсем, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ тата Сталинград хулине хÿтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен хулари комитетăн председателĕ Чуянов юлташ, ВКП(б) хула Комитечĕн секретарĕ Пиксин юлташ, Хула совет исполкомĕн председателĕ Пигалев юлташ, хулари ĕççыннисен представителĕсем.

ВКП(б) Обкомĕн тата Сталинград хула совечĕн ячĕпе митинга Пигалев юлташ уçать.

Малтанхи сăмаха пĕрремĕш степенлĕ Суворов орденĕн кавалерне Чуйков генерал-лейтенанта параççĕ.

— Сталин юлташ патне янă çырура, — тет вăл, — хулана геройла хÿтĕлекенсем Сталинград хулине вилсен те тăшмана памалла мар тесе тупа турĕç. Эпир çирĕп пултăмăр! Çулпуçа панă сăмаха пурнăçа кĕртрĕмĕр.

Хĕрÿллĕ сăмахсемпе гвардин генерал-майорĕ Совет Союзĕн Геройĕ Родимцев, Пĕрремĕш степенлĕ Суворов орденĕн кавалерĕ генерал-лейтенант Шумилов юлташсем тухаççĕ.

Митинга пухăннисем Украинăри Коммунистсен (большевиксен) партин Центральнăй Комитет секретарĕн Н. С. Хрущев юлташăн сăмахне пысăк тимлĕхпе итлеççĕ. Сталинград çарĕн боецсене вăл хамăр тăван çĕршывăн тăшманне çĕнтернĕ ятпа ырă сунса саламлать.

— Тăшман хăшпĕр вырăнта Атăл патне тухма пултарчĕ,—тет Хрущев юлташ. — Анчах Атăл патĕнчен вара фашистсем валли çава шăтăкне кăна çул пулчĕ.

Хрущев юлташ митингра пулнисене паянхи çĕнтерÿре малалла кĕрешмешкĕн, татах та вăйлăнрах малалла каймашкăн вăй илме чĕнет.

— Сывă пултăр пирĕн Хĕрлĕ Çар! Сывă пултăр пирĕн полководец Сталин юлташ! Пирĕн Сталина — урра! — тесе вĕçлет хăйĕн сăмахне Хрущев юлташ.

Площадьре пирĕн полководец тата çулпуç Сталин юлташ ячĕпе хăватлăн «урра» кăшкăрни кĕрлесе каять.

Унтан ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ тата хулана хÿтĕлес тĕлĕшпе ĕçлекен Комитетăн председателĕ Чуянов юлташ, ВКП(б) хула комитечĕн секретарĕ Пиксин юлташ тухса сăмахсем калаççĕ. Пиксин юлташ Сталинград ĕççыннийĕсемпе хулана хÿтĕлекенсем Сталин юлташ патне яракан салама тата хулари ĕççыннисем Кăнтăр тата Дон фрончĕсенчи войскăсен боецĕсемпе командирĕсем патне яракан салама вуласа параççĕ. 264-мĕш номерлĕ заводăн рабочийĕ Седнев юлташ Хĕрлĕ Çара мĕнпур рабочисен ячĕпе саламласа тав тăвать.

Б. АФАНАСЬЕВ.

СТАЛИНГРАД, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС Спецкорĕ).

Колхоз Сывлăш-Çар Флотĕ валли 2 самолет туянать

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Сталин юлташ Чăваш республикинчи колхозниксемпе колхозницăсене, трактористсене танксен колоннисене тума укçа пухнăшăн иккĕмĕш хут тăванла салам янипе тата Хĕрлĕ Çар ячĕпе тав тунипе хавхаланса, «Марат» колхоз членĕсем Сывлăш-Çар Флотне парнелемешкĕн 2 самолет туянма государство банкне 200.000 тенкĕ укçа хывреç.

В. Андреев.

Мускаври профсоюз активĕн пухăвĕ

Февралĕн 3-мĕшĕнче Союзсен Çурчĕн Колоннăй залĕнче Мускаври профсоюз активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухăва ВКП(б) Мускав Горкомĕн секретарĕ Г. М. Попов юлташ уçрĕ. Вăл доклад тума ВЦСПС секретарьне Н. М. Шверник юлташа сăмах пачĕ.

Мускаври профсоюз активĕ историллĕ кунсенче, Хĕрлĕ Çар аслă Сталин ертсе пынипе ăнăçлăн малалла куçса пынă кунсенче, совет çĕрне гитлерла ирсĕрсенчен тасатса пынă кунсенче, пухăнчĕ. Противникăн Сталинградри группировкине çапса аркатнă, пĕтерсе тăкнă. Сталинград патĕнчи çапăçу, вăрçăсен историйĕнчи чи пысăк çапăçусенчен пĕри пулса тăраканскер, Хĕрлĕ Çар пĕтĕмĕшпех çĕнтернипе вĕçленчĕ. Совет боецĕсем тунă чаплă çитĕнӳсем тыла тăшмана часрах çĕнтермешкĕн тата вăйлăрах ĕçлеме хавхалантараççĕ. Çак кунсенче фронтпа тыл пĕрле паттăр ĕçлесе, Верховный Главнокомандующин приказне пурнăçа кĕртме тăрăшаççĕ. Профсоюзсен те çав тĕллевпех ĕçлемелле. Вĕсен халĕ рабочисемпе служащисемшĕн, вĕсене апат-çимĕç тата промышленность таварĕсем парса тăрас ĕçе лайăхлатассишĕн нихăçанхинчен те ытларах тăрăшмалла. Суту-илӳ организацийĕсен нумайĕшĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур. Потребителе ырă кăмăлпа пăхман фактсем тĕл пулаççĕ.

Оборонăн Государственный Комитечĕ профсоюзсене суту-илӳ пункчĕсене контрольлесе тăма хушрĕ. Ку вăл пысăк та хисеплĕ задача пулса тăрать. Профсоюз организацийĕсен магазинсенче продуктсене тĕрĕс виçсе панине, столовăйсенче апат пĕçернине, çынсене апат панине, государство кăтартнă хаксене пурнăçа кĕртсе пынине, суту-илӳ пункчĕсем санитари тĕлĕшĕнчен мĕнле тăнине тĕплĕн тĕрĕслесе тăмалла. Çитес вăхăтрах пăсăлнă тарасасене пурне те тĕрĕслесе тухмалла, вĕсене предприятисен вăйĕпе юсамалла. Магазинсемпе столовăйсенче çĕнĕрен прейскурантсемпе менюсем çырса хурас йĕрке туса хумалла, вĕсенче çынсене паракан апатсен йывăрăшĕпе хакĕсене кăтартса памалла.

Февраль уйăхĕнче предприятисемпе учрежденисенче обществăллă контролерсене суйласа хумалла. Контролерсем пулма ĕçе парăнса ĕçлекен, ăслă-пуçлă, авторитетлă çынсене, нормăсемпе калькуляцисене пĕлекен çынсене, палăртнă çитменлĕхсене час пĕтерттерме пултаракан çынсене суйламалла.

Мускаври профсоюз организацийĕсем хăйсен умне лартнă задачăна чыслăн пурнăçа кĕртĕç, столовăйсенче апатланас ĕçе тата магазинсене куллен тĕрĕслесе тăрĕç, тесе шанса каларĕ Шверник юлташ.

Малалла Шверник юлташ çар служащийĕсен çемьисене пулăшасси çинчен каларĕ. Вăл çакна палăртрĕ: тĕнчере урăх нимĕнле çаршăн та Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшнă пек тăрăшмаççĕ. Пĕтĕм совет халăхĕ унăн боевой хăватне пĕр чарăнмасăр ӳстерсе пырать, ăна нимĕçсен фашистла захватчикĕсене çапса аркатма пулăшса тăрать. Совет правительстви фронтра боецăн хăйĕн çемьишĕн пăшăрханмалла ан пултăр тесе мĕнпур вăйпа тăрăшать. Çакă вăл вăрçă пуçланнăранпа кăларнă темиçе законран — çар служащийĕсен çемьисене налог тĕлĕшĕнчен, государствăна продуктсем тăратас тĕлĕшĕнчен льготăсем парасси çинчен, аслă шкулсемпе вăтам шкулсенче вĕреннĕшĕн вĕсенчен укçа илмелле марри çинчен калакан законсенчен курăнать. Вунтăхăр уйăх хушшинче фронтовиксен çемьисене государство темиçе миллиард тенкĕ пособи панă. Воинсен çемьисемшĕн предприятисемпе учрежденисен коллективĕсем те хĕрӳллĕн тăрăшаççĕ.

Анчах та хăшпĕр вырăнсенче çар служащийĕсен арăмĕсемпе ачисене сиввĕн пăхнă фактсем те тĕл пулаççĕ. Боецсемпе командирсен çемьисемшĕн тăрăшни пĕтĕм Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшнин çурри пулса тăнине профсоюз организацийĕсен пур руководителĕсем те ăнланса илмен-ха. Çак тĕлĕшпе, профсоюзсем çине пысăк ответлăх хунă. Вĕсен фронтовиксен çемьисене ĕç тупма çеç мар, вĕсене хăвăртрах квалификаци туянма та пулăшмалла, вĕсен ачисене яслĕсемпе ача сачĕсене вырнаçтарма тăрăшмалла, кашни фронтовик çемьин çимĕç пахчи пултăр, тесе тăрăшмалла, çав çĕрсене сухалама, сӳреме пулăшмалла.

Совет воинĕсен çемьисемшĕн тăрăшни Хĕрлĕ Çарăн çапăçас хăватне тĕреклетме пулăшать. Çак задача вăл пирĕн халăхăн пĕтĕмĕшле тĕллевĕпе — Совет çĕрне гитлерла кĕтӳсенчен тасатас задачăпа уйрăлми çыхăнса тăрать.

Шверник юлташăн доклачĕ тăрăх тухса каланă çынсем — партипе профсоюз работникĕсем — суту-илӳ пункчĕсене общество енчен контрольлесе тăрассине организацилес ĕçре тата çар служащийĕсен çемьисене пулăшса тăрас ĕçре пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕç.

Пуху Шверник юлташăн доклачĕ тăрăх тĕплĕ решени йышăнчĕ.

Профсоюз активĕ, питĕ вăйлăн хавхаланса, Сталин юлташа яма саламлă çыру йышăнчĕ. (ТАСС).

Пĕррĕмĕш степеньлĕ Суворов орденне артиллери маршалне Н. Н. Воронов юлташа, генерал-полковника К. К. Рокоссовский юлташа тата генерал-лейтенанта Ф. И. Толбухин юлташа, пĕррĕмĕш степеньлĕ Кутузов орденне генерал-лейтенанта М. С. Громадин юлташа пани

Февралĕн 5-мĕшĕнче Кремльре СССР Верховный Совет Президиумĕн председателĕ М. И. Калинин юлташ пĕррĕмĕш степеньлĕ Суворов орденне артиллери маршалне Н. Н. Воронов юлташа, генерал-полковника К. К. Рокоссовский юлташа тата генерал-лейтенанта Ф. И. Толбухин юлташа панă, пĕррĕмĕш степеньлĕ Кутузов орденне генерал-лейтенанта М. С. Громадин юлташа панă. (ТАСС).

Тăшманăн татах тепĕр группировкине пĕтерсе тăкнă

ВОРОНЕЖ ФРОНЧĔ, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Нимĕçсен çавăрса илнĕ гарнизонĕ хирĕç тăнине паян совет боецĕсем çĕмĕрсе тăкса, вăйлă çапăçу хыççăн Старый Оскол хулипе чугунçул станцине йышăнса илчĕç. Совет войскисем тăшмана татах та тепĕр хут хăватлăн пырса çапрĕç.

Çав хулара гитлеровецсем хăйсен тата венгерсен арканнă дивизийĕсен юлашкийĕсене тата нимĕçсен тĕрлĕ чаçсенчен пĕрлештерсе тунă полкне пухса тăратнă пулнă.

Фашистсем Старый Оскол районне, аякран пулăшу килессине шанса, хăйсен аллинчех тытса тăма ĕмĕтленнĕ. Анчах та юлашки кунсем гитлеровецсене пысăк инкек кӳчĕç. Вĕсем хăйсем кĕтнĕ пулăшăва илеймерĕç кăна мар, каялла чакса тухма та пачах çулсăр тăрса юлчĕç. Кунтан та ытларах, совет чаçĕсем тăшманăн группировкине пайăн-пайăн уйăрса, пĕтерсе тăкма тытăнчĕç.

Нимĕçсен Старый Осколри гарнизонĕ тăталса юлнă тепĕр группировкăпа пĕрлешме темиçе хутчен те пĕтĕм вăйне хурса хăтланса пăхнă. Анчах вĕсен ĕçĕ ăнăçлă пулман.

Хулашăн питех те хĕрӳллĕ çапăçусем пулса пычĕç. Хăйсен аллинче нумай йышлă артиллери, миномётсемпе пулеметсем тытса тăрса, гитлеровецсем вăйлăн хирĕç тăчĕç. Хăйсен позицийĕсем патне пымалли мĕнпур вырăнсене вĕсем минăсем хурса тухнă, хула йĕри-тавра йĕплĕ пралук карти тытса çавăрăннă. Чул çуртсенчен дзотсем туса хунă.

Хула хĕррисене пуринчен малтан Бешко юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем çĕмĕрсе кĕчĕç. Нумай сехет хушши пынă çапăçу хыççăн вĕсем чугунçул станцине йышăнса илчĕç те хула варринелле сăрхăнса кĕме тытăнчĕç. Часах вĕсем телеграф çуртне тата тепĕр пысăк çурта тытса илчĕç, çав çуртсем çине пирĕн боецсем çийĕнчех хĕрлĕ ялав лартрĕç.

Унтан çапăçу хулан хĕвеланăç енне куçрĕ. Нимĕç гарнизонĕн пĕр пайĕ, малалла хирĕç тăни усăсăр пулнине ăнланса илсе, тыткăна парăнчĕ. Анчах та фашистсен тепĕр пайĕ хирĕç тăма пăрахмарĕ-ха. Противник чугунçулпа шоссе çулĕсем çинче çирĕпленсе ларма хăтланчĕ. Пирĕн чаçсем вара, ăста маневр туса, хирĕç тăракан тăшмана çавăрса илчĕç те пĕтерсе тăкрĕç.

Старый Оскол хулине халĕ ĕнтĕ противникран пĕтĕмĕшпех тасатнă. Пирĕн чаçсем пысăк трофейăсем тытса илнĕ, фашистсен темиçе пин салтакне тыткăна илнĕ.

Комсомольски районри коммунистсен отчетпа суйлав пухăвĕ

Çак кунсенче Комсомольски районри коммунистсен отчетпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Районри парторганизацин отчетлă тапхăрти ĕçĕсем çинчен ВКП(б) райкомĕн пĕррĕмĕш секретарĕ Георгиев юлташ доклад турĕ.

Парторганизаци, уйрăмах отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче, партипе правительствăн решенийĕсене пурнăçлама районри ĕçсыннисене начар мар мобилизацилесе пынă. Коммунистсем ертсе пынипе, районри ĕçсыннисем фронта пулăшас тĕлĕшпе паха ĕçсем чылай тунă. Коммунистсем ертсе пыракан колхозсем—„Красный Октябрь“ (председателĕ Р. Акчурин), „Трактор“ (председателĕ Т. Иванова) т. ыт. колхозсем те ялхуçалăх ĕçĕсенче малта пыраççĕ. Пĕлтĕр машинно-тракторнăй станци те, ытти çулхисенчен лайăхрах ĕçлерĕ, тракторпа тумалли ĕçсен планне — 102,5 процент, авăн çапмалли плана 137 процент тултарчĕ. Район 1942 çулта выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ĕнесем енĕпе 105 процент, сурăхсем енĕпе—102 процент, сыснасем енĕпе—113 процент пурнăçларĕ. Вуншар колхозсем государствăна пахча-çимĕç тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем срокчен парса татнă. Отчет хыççăн пухура 19 çын тухса каларĕ.

Партие илес тĕлĕшпе хăшпĕр ĕçсене тунă, анчах колхозниксене, фермăра ĕçлекенсене парти ретне илес ĕç пачах та çителĕксĕр пулса пырать. Кивĕ Сĕнтĕрти, Çĕнĕ Маратри, райпотребсоюзри пуçламĕш парторганизацисем отчетлă тапхăрта пĕр çынна та парти ретне илмен. Пуçламĕш парторганизацисем пĕтĕмпе те районри икĕ колхозра çеç. Партин хăшпĕр пуçламĕш организацийĕсенче коммунистсен пухăвĕсем сайра-хутра çеç пулса иртеççĕ. Райуполнаркомзагри (секретарĕ Новикова) 1942 çулхи июль уйăхĕнчен вара пĕр пуху та ирттермен. Çакăн пек пуçламĕш парторганизацисен ĕçри сӳрĕклĕхĕпе ВКП(б) райкомĕ тата унăн оргинструкторски отделĕ килĕшсе пурăннă.

Çамрăк коммунистсем хушшинчи партиллĕ-политикăллă ĕçе те начар туса пыраççĕ. Районра стаж иртнĕ кандидатсем 22 çын шутланаççĕ. Çакă вăл кандидатсен пĕтĕм хисепĕн 58 процентĕ пулать.

Партин хăш-пĕр организацийĕсем комсомол организацийĕсене тивĕçлипе пулăшса пымаççĕ, вĕсен ĕçĕпе интересленмеççĕ.

Пропагандăпа агитаци ĕçĕнче те çитменлĕхсем нумай. Районра 26 агитколлектив ĕçлет, вĕсенче 370 ытла агитатор пĕтĕççе тăрать. Анчах ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци отделĕ вĕсене конкретно ертсе пымасть. Агитколлектив руководителĕсем чылайĕшĕ хăйсен агитаторĕсене те пĕлмеççĕ. Çĕнĕ Кипечре, Нĕркечре, Çĕнĕ Маратра парти историне вĕренмелли кружоксем организациленĕ, анчах вĕсем йĕркеллĕ ĕçлемеççĕ-ха.

Районри парторганизаци ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XIII-мĕш Пленумĕн решенийĕсене çителĕксĕр пурнăçласа пырать. Вăл решенисене пурнăçлама районри коммунистсене кирлĕ пек мобилизацилемен. Пленумăн решенийĕсене чылай организацисенче халĕ те сӳтсе-явман.

Çавăн пирки çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе чылай колхозсем сӳрĕккĕн ĕçлеççĕ. Район вăрлăх фондне 78 процент çеç хывнă. Хăш-пĕр колхозсем халĕ те ялхуçалăх машинисене ремонтлама, транспорт тата лаша кӳлмелли хатĕрсене юсама тытăнман.

Районри вырăнти промышленность предприятийĕсемпе артельсем, райпромкомбинат тата пром артельсем вăрçă вăхăтĕнчи пек ĕçleме халĕ те вĕренсе çитмен-ха. „Красный инвалид“ артельсĕр пуçне 1942 çулхи производство планне пĕр артель те тултарман. Полина Осипенко ячĕпе тăракан артель иртнĕ çулхи плана 32 процент çеç тултарнă.

Коммунистсен районри пухăвĕ çавăн пекех тата райуполнаркомзаг, райпотребсоюз, райфо ĕçĕнчи çитменлĕхсене те палăртрĕ, вĕсене çийĕнчех пĕтерме хушса хăварчĕ. Пуху районри парторганизаци умĕнче тăракан черетри ĕçсене хăвăртрах пурнăçлас тĕлĕшпе татăклă решени йышăнчĕ.

Пуху ВКП(б) райкомĕн çĕнĕ составне, ревизи комиссине суйларĕ.

ВКП(б) райкомĕн организациллĕ ларăвĕ ВКП(б) райкомĕн секретарĕсем пулма Георгиев, Аввакумов тата Мышкин юлташсене суйларĕ.

В. Андреев

Пирĕн землянксем

Хăюллисенчен пĕри

— Тăшмана пĕр хĕрхенӳсĕр аркатса тăкăпăр. Тăван çĕршывăн чыслăхне вараламăпăр, дисциплинăллă та паттăр пулăпăр! — çакăн пек тупа тунă Гварди ялавне илнĕ чух боецсем.

Çак савăнăçлă вăхăтра нумай чĕресем хыттăн тапнă. Тусĕсемпе пĕрле старши лейтенант Василий Немцов та хумханнă. Савăннă вăл, Хĕрлĕ Ялав илни гвардеецсене çĕнĕ вăй-хал панă.

Çак вăхăтра чăваш-гвардеец Василий Немцов умне иртнĕ пурнăçри картинăсем туха-туха тăнă. Аса илнĕ вăл вăрçă вучĕ витĕр тухнă кунсене. Аса илнĕ хăй Хĕвеланăç Белоруссири тата Хĕвеланăç Украинăри тăванла халăхсене ирĕке кăларнă çĕре хутшăннине. Çапăçури нумай эпизодсем пуçран тухма пĕлмен.

1939 çулхи кĕркуннерен пуçласа паянхи кунччченех—вăл Тăван çĕршывăн шанчăклă хуралçи, ăна тăшмансенчен хӳтĕлекенĕ. Совет Союзĕнчи мĕнпур халăхсен мухтавлă ывăл-хĕрĕсемпе пĕрле Немцов 1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче — çĕршывшăн çак питех те хăрушă кун — гитлерла Германие хирĕç, ирсĕр фашистсене хирĕç кĕрешме тытăнать. Хăюллă пехотинец çав кун пуçламĕш хут нимĕç вăрă-хурахĕсене вĕлерет.

Çапăçура вăл яланах маттур та чее, тӳсĕмлĕ. Икĕ хутчен аманнă, каллех строя тăнă. Тăван çĕршывăн хĕвеланăç чиккинчен пуçласа Дон шывĕн çыранĕсем таран хĕрӳллĕ çапăçусенче пулса, Василий Нем-

цов тăшмана мĕнле пĕтермеллине лайăх вĕренсе çитнĕ, пысăк опыт туяннă. «Эпĕ тăшман тискерлĕхне хам куçпа хам куртăм. Унăн юнлă ĕçĕсене, унăн тискерлĕхне ниепле те чăтма çук, — тесе çырать вăл хăй çуралнă Мăн Чурашри (Советски р.). «Прогресс» колхозра бригадир пулса ĕçлекен 66 çулхи ашшĕ патне. — Эпĕ тăшмана çав тери курайăмастăп, çавăнпа ăна кунран кун пĕтерсе пыратăп».

Немцов юлташ вăрçăччен ытти çынсенчен нимпе те палăрса тăман. Унăн çамрăклăхĕпе ачалăхĕ, тăван çĕршыври мĕнпур совет ачисенни пекех, шкулта иртнĕ. Вĕреннĕ. Вăтам пĕлӳ илнĕ. Унтан учительре ĕçленĕ. Ун чухне те вăл çĕршыва мĕнле те пулин ырлăх тума ĕмĕтленнĕ. Халĕ, вăрçă кунĕсенче; рядовой совет çынни — чăваш халăхĕн шанчăклă ывăлĕ Василий Немцов чапа тухрĕ.

...Дон юханшывĕ таврашĕнче наступлени. Мухтавлă Хĕрлĕ Çар боецĕсем нимĕçсене хĕссе пыраççĕ. Василий Немцов та хăйĕн хастарлă гвардеец-тусĕсемпе пĕрле наступленире. Урса кайнă гитлеровецсем Дон çеçенхирĕнче хăйсене валли ылханлă вилĕм шыраççĕ, хăйсене валли вилĕм шăтăкĕ чаваççĕ. Немцов юлташ çакăнта тăшманăн чĕрĕ вăйĕпе техникине нумай пĕтерет.

Хăюллă воин Немцов юлташ фронтра большевиксен парти ретне кĕрет. Партбилета алла илсе, вăл тăшмана пĕр вĕçĕмсĕр пĕтерсе пыма часть командованийĕ умĕнче тепĕр хут тупа тăвать.

Гвардин старши лейтенанчĕ Василий Немцов тăшмана хирĕç халĕ те паттăррăн кĕрешет. Çапăçура паттăрлăхпа хастарлăх кăтартнăшăн тата командовани приказĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртнĕшĕн Совет Правительстви ăна Хĕрлĕ Çалтăр орденĕпе наградăланă.

И. Алексеев.

Ют çĕршывсенче

„Вырăс çарĕн паттăр ĕçĕ ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнĕ“

Америкăри пичет нимĕçсене Сталинград патĕнче çĕмĕрсе тăкни çинчен

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче çĕнтерӳ туни çинчен пĕлтернисене Америкăри хаçатсем чи курăнмалла вырăнсенче пичетлеççĕ. Çак событи çинчен хаçатсем пысăк статьясем пичетлеççĕ тата Хĕрлĕ Çар тыткăна илнĕ нимĕç генералĕсен фотоӳкерчĕксене кăлараççĕ.

«Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатăн вăрçă ĕçĕсем çинчен çыракан корреспонденчĕ майор Элиот: Сталинград патĕнче нимĕç захватчикĕсен ирсĕр шухăшĕсене кĕл пек вĕçтерсе янă, тесе çырать. Сталинград патĕнчи çĕнтерӳ Гитлерпа унăн çарĕ пурпĕрех пĕтессине аса илтерет. Гитлер çарĕ Сталинград патĕнче чи пысăк катастрофа тӳсрĕ, Германи пурăннăранпа çавăн пек катастрофăна Германи çарĕ нихăçан та тӳссе курман-ха. Элиот çакна паллă тăвать: Совет войскисен çĕнтерĕвĕ вĕсем çапăçу хирĕнче паттăрлăх кăтартнин тата верховнăй командовани пĕлсе ертсе пынин результачĕ пулса тăрать, тет. Вырăссем çав çапăçура кăтартнă мастерлăха ӳстерсе хаклама та йывăр, тесе çырать вăл. Сталинградшăн пынă пысăк çапăçу вĕçленчĕ. Вăл çапăçу çакна кăтартса парать: гитлеровецсен вăй-хăвачĕ халĕ ĕнтĕ чакса пырать тата паянтан пуçласа вĕсем пурпĕрех вăйсăрланса пырасси пуçланать. Вырăс çарĕн паттăр ĕçĕ ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнĕ, ун çинчен ирĕклĕ халăхсем, ирĕклĕхшĕн вилме те хатĕр тăраканскерсем, нихăçан та манмĕç.

«Нью-Йорк таймс» хаçат çапла çырать: Сталинградшăн пынă çапăçу пĕтĕм тĕнчери хальхи вăрçăри çапăçусенчен чи вăйли пулчĕ. Вăл татăклă çапăçу та пулма пултарать. Сталинград патĕнче Германи войскисемпе вырăс войскисем чăтăмлăх испытанине тытрĕç. Вырăссем çак испытанире çĕнтерчĕç.

Англи журналисчĕ Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче çĕнтерни çинчен

ЛОНДОН, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Англири паллă журналистăн Уйксэм Стидăн обзорне парать, унта Хĕрлĕ Çар Сталинград патĕнче çĕнтерни çинчен çырнă. Стид 90 çул ĕлĕкрех Англире «Пĕтĕм тĕнчери 15 татăклă çапăçу» ятлă кĕнекене пичетлесе кăларни çинчен аса илтерет. Çав кĕнекере авалхи ĕмĕрсенчен пуçласа çĕнĕ вăхăтчен пулнă чи пысăк çапăçусем çинчен çырнă, унта вырăс войскисем Петр Великий ертсе пынипе Полтава патĕнче Швеци çарне çĕмĕрсе тăкнине курăнмалла вырăнта пичетленĕ.

Сталинградшăн пынă çапăçăва пулас историксем мĕнле вырăн парĕç-ши, — тесе ыйтать автор. Вăрçăри вăйсене çакăн пек пысăк çапăçура тĕрĕслесе пăхни урăх пулман-ха тата вăл питех те паллă результатсем патне илсе пыма пултарать. 330 пин çынран тăракан, ку чухнехи вăрçă хатĕрĕсемпе çав тери вăйлăн хĕçпăшалланнă, питех те нумай складсемпе транспорт тытса тăракан çавăн пек çара хупăрласа илсе пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкни примерне историре пĕрре те тупма çук.

Германи çарне çĕнтерме çук текен юмаха, тет малалла Стид, пĕтерсе тăкнă. Гитлерăн вăрçăри руководстви хăйĕн чапне çухатрĕ, унăн хăйĕн авторитетне те çапса аркатнă. Историксем Сталинград патĕнчи çапăçăва Европăн тата, тен, пĕтĕм тĕнчен кунçулĕнчи çавăрăну пункчĕ тесе хаклама пултараççĕ. Вырăс çарĕ Сталинград патĕнче çĕнтерни хальхи вăрçăн çĕнĕ, тен, татăклă тапхăрĕ пуçланнине пĕлтерет. Черчилль Рузвельтпа Касабланкăра тĕл пулнă хыççăн Турцие тата Кипр утравĕ çине пырса кайни çак çĕнĕ тапхăр чи çывăх вăхăтрах пуçланма тивĕçлине кăтартса парать. Вăл тапхăр союзниксен войскисем Европа континентне тапăнса кĕнипе пуçланĕ. Англипе Америка авиацийĕ кăнтăрла Германи çине вĕçсе кайса бомбăсем пăрахни, çак енчен илсен, малтанах систерекен япала пулса тăрать.

„Тăшмана аркатса тăкас ĕçре Франция хăйĕн вырăнне йышăнĕ“

Де Голль тухса калани

ЛОНДОН, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Кĕрешекен Францин Наци Комитечĕн председателĕ де Голль генерал Лондонра радиопа сăмах тухса каланă. Вăл çапла каланă: Гитлер влаçа хăй аллине тытса илни 10 çул тултарнă кун гитлеровецсен пуçлăхĕсем тухса каланă сăмахсем тăшман питех те хăраса ӳкнине кăтартаççĕ. Тăшмана аркатса тăкас ĕçре Франция хăйĕн вырăнне йышăнĕ, вăл çав ĕçе хăйĕн аллинчи мĕнпур хатĕрсемпе усă курса хăвăртлатасшăн. Франция темиçе пая уйăрса яма тата ăна пăлхатма тем тĕрлĕ тăрăшаççĕ пулин те, Франция тăшмана вăйлăрах та вăйлăрах хирĕç тăрать. Хирĕç тăрас ĕçе тара тытнă тинĕс-çар тата сывлăш-çар вăйĕсем—кĕрешме нихăçан та чарăнманнисем те, çĕнĕрен çапăçма пуçланисем те хутшăннă. Франци халăхĕ хăйне юн тăкса, хĕçпăшал вăйĕпе тата союзниксем пулăшнипе ирĕке кăларма тăрăшать, союзниксене вăл хăй ĕлĕк те пулăшнă, халĕ те пулăшса тăрать.

Союзниксен авиацийĕ Турина, Специе, Рура тата Лориана тапанни

ЛОНДОН, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Америка бомбардировщикĕсем ĕнер (вăрçă пуçланнăранпа иккĕмĕш хут ĕнтĕ) Германин çурçĕр-хĕвеланăç пайĕнчи темиçе объекта тапăннă. Бомбардировщиксене тăшманăн истребителĕсен чылай пысăк соединенийĕ хирĕç тăнă.

ЛОНДОН, февралĕн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем Италин автомобильсем тăвакан промышленноçĕн центрне — Турина тата Италин тинĕс базине Специе вăйлăн тапăннă. Çав вăхăтрах бомбардировщиксен ытти соединенийĕсем Рура тата Лориана атакăланă; Лориан вăл Германин Францире, Атлантика океанĕн хĕрринче, вырнаçнă подводнăй лодкăсен тĕп бази пулса тăрать.

Лориана вăйлăн тапăннин результачĕсене пĕлмен-ха. Унччен тунă атакăсенче порта тата ремонтнăй мастерскойсене, шăратакан цеха, складсене тата электростанцие чылай сиенленĕ пулнă. Тинĕс-çар казармисене, офицерсен клубĕн çуртне тата Германи комендатурин çуртне сиенленĕ. Бомбăсем газохранилище çине тата нумай заводсем çине тĕл ӳкнине палăртнă. Тинĕс-çар арсеналĕсене кăна 10 гектар талккĕш çĕр çинче çĕмĕрнĕ.

Аэроплансем çинчен ӳкерсе илнĕ ӳкерчĕксем кăтартнă тăрăх, Туринра промышленноçăн 70 предприятине, çав шутра пысăк çар завочĕсене пурне те тенĕ пекех чылай сиенленĕ.

Гамбурга тапанни

ЛОНДОН, февралĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: февралĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕ Гамбург çине питĕ нумай бомба пăрахнă. Германири подводнăй лодкăсем тăвакан чи пысăк верфьсене тапăннă. 16 бомбардировщик хăйсен базине таврăнман.

ХРОНИКА

РСФСР Верховный Совет Президиумĕ М. Т. Третьяков юлташа РСФСР-ти строительнăй материал промышленноçĕн Халăх Комиссарĕ пулма лартнă.

* * *

РСФСР Верховный Совет Президиумĕ Н. И. Васильев юлташа РСФСР-ти тĕштырă тата выльăх-чĕрлĕх совхозĕсен Халăх комиссарĕ пулма лартнă.

* * *

РСФСР Верховный Совет Президиумĕ Д. А. Кривошеев юлташа, хăйне хушнă ĕçе тума пултараймач пирки, РСФСР-ти тĕштырă тата выльăх-чĕрлĕх совхозĕсен Халăх комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

Пĕлтерӳ

Февралĕн 7-мĕшĕнче, кăнтăрла 1 сехетре, Академиллĕ театрта «Художники Чувашии в дни отечественной войны» ятлă выставкин экспоначĕсене сӳтсе-яваççĕ.

Пухăва пурте кĕме пултараççĕ.

ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен управленийĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн —3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 938 Типографи №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 98. 84 п.